ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ÇАМРĂКСЕН ПОЛИТИКИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи çамрăксен политики çинчен" 2007 çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнчи 70 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2008, 75, 76 №-сем; 2009, 80 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; 2014, 3 №; 2016, 4 №; 2017, 7 №; "Республика" хаçат, 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 16 статьяра:

а) 2-мĕш пайра:

пĕрремĕш предложение çакăн пек çырса хурас: "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ, Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органĕ муниципаллă пĕрлĕхсенче политикăна ачасемпе çамрăксен интересĕсемшĕн хавхалантарас тĕллевпе ачасемпе тата çамрăксемпе ĕçлес енĕпе муниципаллă программăсен конкурсĕсене ирттерме пултараççĕ.";

"конкурсра" сăмаха "конкурссенче" сăмахпа улăштарас, "çамрăксен политикине пурнăçлама" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) 3-мĕш пайра "Конкурс ирттермелли йĕркене тата виçене" сăмахсене "Конкурссем ирттермелли йĕркесене тата виçесене" сăмахсемпе улăштарас;

2) 17 статьяра:

а) 2-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органĕ" сăмахсем хушса хурас, тивĕçлĕ падежри "Конкурс" сăмаха тивĕçлĕ падежри "Конкурссем" сăмахпа улăштарас;

ă) 3-мĕш пайра "Конкурс" сăмаха "Конкурссем" сăмахпа улăштарас;

3) 19 статьян 2-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ йĕркелет" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ, Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органĕ йĕркелеççĕ" сăмахсем хушса хурас;

4) 20 статьяра:

а) 2-мĕш пайăн тăваттăмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ палăртать" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органĕ тивĕçлĕн палăртаççĕ" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 5-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ хăй палăртнă йĕркепе çирĕплетет" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органĕ хăйсем палăртнă йĕркепе тивĕçлĕн çирĕплетеççĕ" сăмахсем хушса хурас;

5) 21 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"21 статья. **Республикăри çамрăксен тата ача-пăча пĕрлешĕвĕсен реестрĕ**

1. Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ хăйсен ĕç-хĕлне Чăваш Республикин территорийĕнче пурнăçлакан тата патшалăх пулăшăвне илсе тăракан Республикăри çамрăксен тата ача-пăча пĕрлешĕвĕсен реестрне (малалла – Реестр) тытса пырать.

2. Çамрăксен пĕрлешĕвĕсене Реестра кĕртесси çинчен калакан йышăнăва Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ тăвать. Ача-пăча пĕрлешĕвĕсене Реестра кĕртесси çинчен калакан йышăнăва Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органĕ тăвать.

Çамрăксен тата ача-пăча пĕрлешĕвĕсене вĕсем заявление тата çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвĕсене çак Саккунăн 20 статйин 2-мĕш пайĕн требованийĕсене тивĕçтернине çирĕплетекен документсене çамрăксен пĕрлешĕвĕсем – Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органне, ача-пăча пĕрлешĕвĕсем – Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органне тăратнă хыççăн пĕр уйăх хушшинче реестра тӳлевсĕр кĕртеççĕ.

3. Енчен те çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвĕ çак Саккунăн 20 статйин 2-мĕш пайĕн иккĕмĕш абзацĕпе палăртнă требованисене пурнăçланине çирĕплетекен документсене тăратман пулсан, Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ е Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органĕ вĕсене ведомствăсем хушшинче хутшăнса ĕçлемелли йĕркепе юридически сăпатсене, физически сăпатсене уйрăм предпринимательсем тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем пек патшалăх енчен регистрацилекен федерацин ĕç тăвакан влаçĕн органĕнчен ыйтса илет.

Ача-пăча пĕрлешĕвне Реестра кĕртме ача-пăча пĕрлешĕвĕ çырса панă заявление тата çав пĕрлĕх çак Саккунăн 20 статйин 2-мĕш пайĕпе палăртнă требованисене тивĕçтернине çирĕплетекен документсене Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органĕ ача-пăча пĕрлешĕвне Реестра кĕртесси çинчен калакан йышăнăва тунă кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органне парать.

4. Çамрăксен тата ача-пăчан Реестра кĕртнĕ пĕрлешĕвĕсем çамрăксен тата ача-пăча пĕрлешĕвĕ çак Саккунăн 20 статйин 2-мĕш пайĕпе палăртнă требованисене тивĕçтернине çирĕплетекен документсене çулталăкра пĕрре тивĕçлĕн Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органне е Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органне тăратаççĕ.

5. Реестра çамрăксен тата ача-пăча пĕрлешĕвĕ çинчен калакан çак сведенисене кĕртеççĕ:

1) тулли тата (енчен те пур пулсан) кĕскетнĕ ячĕсене, унăн ялан ĕçлекен, ертсе пыракан органĕн адресне (вырнаçнă вырăнне);

2) патшалăх регистрацилени çинчен çырса хунин патшалăх регистрациленине палăртакан номерне (патшалăх тĕп регистраци номерне);

3) налук тӳлекенĕн идентификаци номерне;

4) мĕншĕн учета тăратнин кодне;

5) Раççей Федерацийĕн Пенси тата социаллă страхлав фондĕнчи регистраци номерне;

6) çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвне туса хунин тата вăл уставпа килĕшӳллĕн пурнăçлакан ĕç-хĕл тĕллевĕсене;

7) çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвĕ пурнăçлакан ĕç-хĕл тĕсĕсем çинчен калакан информацие;

8) çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвне Реестра кĕртнĕ куна;

9) çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвне Реестртан кăларнă куна тата çавăн сăлтавне.

6. Çамрăксен тата ача-пăчан Реестра кĕртнĕ пĕрлешĕвне çак сăлтавсемпе Реестртан кăларма пултараççĕ:

1) çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвĕ çырса панă заявленипе;

2) Çамрăксен тата ача-пăчан Реестра кĕртнĕ пĕрлешĕвĕсем çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвĕ çак Саккунăн 20 статйин 2-мĕш пайĕпе палăртнă требованисене тивĕçтернине çирĕплетекен документсене çулталăкра пĕрре тивĕçлĕн Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органне е Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органне тăратманнипе;

3) çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвне ют çĕршыв агенчĕсен реестрне кĕртнипе.

7. Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ е Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен органĕ çамрăксен е ача-пăча пĕрлешĕвне Реестртан кăларни çинчен калакан йышăнăва тунă кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче çирĕплетнĕ çав йышăну çинчен асăннă пĕрлешĕве çырса пĕлтерет.

8. Реестрта упранакан информаци пурте усă курма пултаракан информаци шутланать тата унпа Федерацин "Патшалăх органĕсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калакан информацине пурте усă курма пултарассине тивĕçтересси çинчен" 2009 çулхи нарăс уйăхĕн 9-мĕшĕнчи 8-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн паллаштараççĕ.

9. Реестра тытса пымалли йĕркене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.

10. Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ Реестра кĕртнĕ пĕрлешӳсем çинчен калакан, çак статьян 5-мĕш пайĕн

1–8-мĕш пункчĕсенче кăтартнă сведенисене федерацин ĕç тăвакан влаçĕн патшалăхăн çамрăксен политики енĕпе патшалăхăн пулăшу ĕçĕсене туса паракан тата патшалăх пурлăхне тытса пыракан органне кашни кварталта тăратать.".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О.Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕ
47 №